Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Ярапайкасси территори пайĕ

***Ярапайкасси, Елача, Ермак, Итакачкасси, Милютакасси, Тури Тăмлай, Вускасси, Иштерек, Çĕн Тăмлай, Анатри Тăмлай, Сыпай, Шурча, Вăрăмой, Кӳстерек, Çĕньял Шурча, Шуркасси ялĕсем***

## Çынсем лайăх малашлăха шанса пĕрле тăрăшаççĕ



**Шуркассинче те халĕ вак чул сарнă йĕркеллĕ çул пур.**



**Ярапайкассинчи шыв усламалли башньăна республика программине хутшăнса çĕнетме май килнĕ.**




**Юсав ĕçĕсем хыççăн Шурча палăкĕн сăн-сăпачĕ тĕпрен улшăннă.**



**Шурча палăкĕ юсав ĕçĕсем туса ирттериччен.**

Çакăн палăрăмлă ырă енĕсем те сахал мар. Вĕсене вара Ярапайкасси тăрăхĕнче пулса курсан кирек кам та туйса илетех. Паллă ĕнтĕ, ырри, лайăххи хăй тĕллĕн пулас çук. Пурте пĕр çыхăра пулни, пĕрле тăрăшни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна паян территори пайĕнчи 16 ялта пурăнакансенчен ытларахăшĕ тĕрĕс ăнланать, хăйсен тăрăхне илемлĕрех те хăтлăрах тăвассишĕн тимлет.

Уйччен ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче, пĕлтĕртенпе Муркаш муниципалитет округĕн территори пайĕн пуçлăхĕнче Олимпиада Веселова тăрăшать. Паллă ĕнтĕ, ырă улшăнусенче выранти ертӳçĕн пĕлтерĕшĕпе выранне те палăртмасăр ниепле те май çук.

Уйрăмах юлашки 2 – 3 çулта кунта ял çыннисен пурнăçĕнче пулса иртнĕ улшăнусем чăннипех те курăмлă. Çак ĕç халĕ малалла тăсăлать. Çĕршыва Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн пуçарăвĕпе пурнăçа кĕрекен наци проекчĕсем, вĕсен шайĕнче туса хатĕрленĕ федераци тата регион проекчĕсемпе программисем, муниципалитет программисем пулăшнипе ял çыннишĕн питех те пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан çĕнĕрен çĕнĕ инфраструктура объекчĕсем хута каяççĕ, киввисене юсаса çĕнетеççĕ, ытти ĕç сахал мар туса ирттереççĕ. Çаксем пĕтĕмпех çынсен пурнăç шайне ӳстерсе пыма май параççĕ.

Олимпиада Михайловна асăннă тăрăх, ку тĕлĕшпе 2021 çул уйрăмах «тухăçлă» пулса тăнă. Çав çул ку тăрăхра харăсах 3 наци проекчĕ шайĕнче вицĕ объектра калăпăшлă ĕçсем туса ирттернĕ. «Культура» наци проекчĕ шайĕнче Ярапайкассинче 150 вырăнлă çĕнĕ Культура çурчĕ хута янă. Ăна çĕклеме 33 млн та 330 пин тенкĕ уйăрнă. Вăл шутран 33 млн тенкине – федераци бюджетĕнчен, ыттине – республика бюджетĕнчен. Кунпа пĕрлех «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕпе Шурчара çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ уçăлнă, «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕпе вара 3,3 километр тăршшĕ «Волга» – Вăрăмой» автомобиль çулне тĕпрен юсаса нормативлă шая çитернĕ. Апла пулсан çынсен пурнăç условийĕсем те самай лайăхланнă.

Хăтлăх ĕçĕсем – пĕр кунлăх ĕç мар. Ку енĕпе вĕçĕм тĕллевлĕ ĕçлесе пырас пулать. Çакна яланах асра тытаççĕ ку тăрăхра. Акă малараххи çулсенче территорири татах 3 фельдшерпа акушер пунктне те тĕпрен çĕнетме май килнĕ. 2021 çул пуçламăшĕнче вара капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн Сыпай клубĕ хăйĕн алăкĕсене уçнă. Çакă Сыпай, Иштерек, Вускасси, Анатри Тăмлай, Çĕн Тăмлай тата Тури Тăмлай ялĕсенче пурăнакансемшĕн кĕтнĕ парне пулнă. Кунти библиотекăн та сăн-сăпачĕ çĕнелсе улшăннă. Çавăн пекех 2021 çултах Шурча библиотекине те çĕнетнĕ. Аслисем те, ачасем те кунти вулав залĕпе активлă усă кураççĕ. Ачасемпе ашшĕ-амăшĕ – библиотекăн яланхи хăнисем.

«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ шайĕнче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕнче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Сăмах май, территори пайĕн администрацийĕ те ку çуртра вырнаçнă. Пӳлĕмсенче хăтлă, тирпейлĕ, таса.

2017 çултанпа республикăра пуçарулăх бюджечĕн программи пурнăçа кĕме пуçларĕ. Ку тăрăхра пурăнакансем пĕрремĕш çултан тытăнсах асăннă программăна активлă хутшăнаççĕ. Ун чухнех пуçарулăх проекчĕсене иккĕ пурнăçа кĕртме пултарнă. Вĕсен шучĕ те, сумми те çултан-çул ӳссе пырать, ĕçĕсем те калăпăшлăрах.

Ярапайкасси территори пайĕнче пурăнакансемшĕн пуçарулăх бюджечĕн программи выранти çулсене юсаса йĕркене кĕртессишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Акă çапла майпа 2021 çулта Милютакассинчи Складская урам çулне 1 млн та 557 пин тенкĕлĕх, Çĕньял Шурчари Колхозная урам çулне 465 пин тенкĕлĕх юсанă. Çул-йĕр фончĕ шучĕпе вара ун чухне Вускассинче, Анатри Тăмлайра, Шурчара, Итакачкассинче урам çулĕсене йĕркене кĕртме май килнĕ.

Тепĕр çулне те çапла майпа çул-йĕр юсав ĕçĕсене икĕ объектра туса ирттернĕ. Ермак ялĕнчи Школьная тата Елача ялĕнчи Запрудная урам çулĕсене вак чул сарса хытарнă. Ĕçсен проектпа пăхнă хакĕсем 1 млн та 768 пин тата 1 млн та 71 пин тенкĕпе танлашнă. Милютакасси ялĕнче пурăнакансем вара хăйсем те хутшăннипе пуçарулăх мелĕпе кунти пĕвене тасатса йĕркене кĕртнĕ, таврашĕнчи территорие хăтлăлатнă. Ĕçсене 850 пин тенкĕлĕхе яхăн пурнăçланă.

Олимпиада Веселова асăннă тăрăх, 2023 çулта та пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе сахал мар ĕç пурнăçлама пултарнă. Пĕлтĕр выранти çулсене харăсах пилĕк ял урамĕнче вак чул сарса юсанă. Итакачкассинчи Советская урам çулне юсанă çĕрте ĕçсене 1 млн та 912 пин тенкĕлĕх пурнăçланă, асăннă ялти Первомайская урам çулне юсама 966 пин тенкĕ, Шуркассинчи Трудовая урам çулне юсама 708 пин тенкĕ уйăрнă. Çавăн пекех Кӳстерекри Северная тата Елачари Лесная урамсен çулĕсене те юсаса йĕркене кĕртме пултарнă.

Кунпа пĕрлех пĕлтĕр 2022 çултан куçнă икĕ объект та пулнă. Çапла вара Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнисене тата вăрçа хутшăннисене асăнса Шурча ялĕнче капмар палăк туса лартнă. Çавна валли уйăрнă сумма 2 млн та 836 пин тенкĕпе танлашать. Кунпа пĕрлех Вускасси ялĕнче пĕвене тасатса хăтлăлатнă. Кунта ĕçсене 1 млн та 632 пин тенкĕлĕх туса ирттернĕ.

Кăçал туса ирттерме территори пайĕнчен республика комиссине 5 проект сĕннĕ пулнă. Вĕсем пурте конкурс тĕрĕслевĕ витĕр тухма пултарнă. Ĕçсем уйрăмах калăпăшлă, проектсен хакĕсем пĕчĕк мар.

Акă Иштерек ялĕнчи пĕвене тасатасси 8 млн та 42 пин тенкĕне, пĕве çывăхĕнчи территорие тасатса тирпейлесси тата хăтлăлатасси 4 млн та 211 пин тенкĕне, Вускасси ялĕнчи çула юсаса йĕркене кĕртесси 1 млн та 21 пин тенкĕне, Шурча ялĕнче пушар машинипе шыв илме пĕве тăвасси 1 млн та 903 пин тенкĕне, Ярапайкасси ялĕнчи Молодежная урамра спорт площадки йĕркелесси 1 млн та 220 пин тенкĕне кайса ларать. Пĕтĕмĕшле асăннă проектсен хакĕ 16 млн та 399 пин тенкĕ ытла. Вĕсене пурнăçа кĕртме республика 60 процент шучĕпе 9 млн та 839 пин тенкĕ уйăрать. Паллă ĕнтĕ, проектсене пурнăçа кĕртме ял çыннисен хăйсен та сахалах мар пухма тивнĕ. Апла пулин те хăтлăхĕ чи малтанах хăйсемшĕн пулнине вĕсем лайăх ăнланаççĕ.

Кунпа пĕрлех кăçалах Чăваш Республикин «Чăваш Республикин территорийĕнче халькхи хула тăрăхĕ йĕркелесси» патшалăх программине хутшăнса Ярапайкассинчи Молодежная урамра ача сачĕ патне кайма асфальт сарса хăтлă тротуар йĕркелеме палăртнă. Ку вара чи малтанах ача садне çӳрекенсемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Малашне йĕпе-сапара пылчăк çăрмалла пулмĕ.

Ĕçмелли шыв, çул ыйтăвĕсем ял çыннишĕн яланах пĕлтерĕшлисен шутĕнче пулнă. Чылай çĕрте шыв усламалли башньăсем, шыв пăрăхĕсем кивелсе çитнĕ. Вĕсене вĕçĕм юсаничен те усси нумаях мар. Çавна май Чăваш Республикин «Модернизация и развитие сферы жилищно-коммунального хозяйства» патшалăх программин «Модернизация коммунальной инфраструктуры на территории Чувашской Республики» хушма программи пурнăçа кĕме тытăнсан Ярапайкасси тăрăхĕнче те улшăнусем пулса иртме тытăнни палăрать.

Выранти пуçлăх асăннă тăрăх, ку программа чи малтанах шыв скважинисене, шыв башнисене çĕнетессипе пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Унта хутшăнса 2022 çулта Ярапайкассинчи шыв усламалли башньăна çĕнетме май çитернĕ. Малашне те çапла майпа башньăсене çĕнетсе пырас шухăшлă.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче çынсем сывă пурнăç йĕркине тытса пыма тăрăшаççĕ. Çакă пуш сăмах мар. Выранти турнирсемпе спартакиадăсем çуллĕ шайра иртеççĕ. Хоккей вăййи вăй илнĕ. Округри ăмăртусенче те çитĕнӳсем курăмлă. Ашшĕ-амăшĕпе ачисем те округри тĕрлĕ конкурса тата ытти мероприятисене хаваспах хутшăнаççĕ, çитĕнӳсемпе савăнтараççĕ.

Пĕрлехи ĕçсене йĕркелеме пулăшакан активистсене, старостăсене те асăнчĕ выранти пуçлăх. Акă Вускасси ялĕн старости Сергей Иванов, Иштерекре пурăнакан Анатолий Шишкин пĕрлехи ĕçсенче яланах пуçарулла, малтисен ретĕнче. Ятарлă çар операцине хутшăнакансене гуманитари пулăшăвĕпе тивĕçтерессипе те ку тăрăхра пурăнакансем активлă, пуçарулла. Шуркасси ялĕн старости Алим Андрианов, Шуркассинче пурăнакан Андрей Троицкий ку тĕлĕшпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Шурча ялĕн старости Сергей Пискарев вара фронт валли УАЗ автомашина та, 70 пин тенкĕ те уйăрса панă. Кун пек ыр кăмăллăх тĕслĕхĕсем татах çук мар. Хăйсен ентешĕсем çар операцийĕнчен çĕнтерӳпе тĕрĕс-тĕкел таврăнасса пурте çирĕп шанаççĕ. Пурте пĕрле пулсан вара ял пурнăçĕ те малаллах аталанса пырĕ, фронтра та çĕнтерӳ нумай кĕттермĕ.



**Кăларăма**
**Владислав ШАПОШНИКОВ**
**хатĕрленĕ.**